Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политики министерстви
ЧР ВМХПВ «Чăваш  Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

Этнокультура вĕренĕвĕн кафедри

# Республикăн пĕрлехи экзаменне 2021 çулта ирттерме хатĕрленесси

Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ  меслетлĕх кăтартăвĕсем

Шупашкар – 2020

Меслетлĕх кăтартăвĕсене тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ. Ĕçĕн тĕп тĕллевĕ – шкул ачисене чăваш чĕлхипе республикăн пĕрлехи экзаменне хатĕрлеме пулăшасси. Кăтартусенче изложенипе сочинени çырма, тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентмелли майсемпе мелсене çырса панă, республикăн 2021 çулта тытмалли пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантĕнче панă ыйтусемпе сочинент темисене тишкернĕ, усă курмалли литература сĕннĕ.

Меслетлĕх кăтартăвĕсене çырнă чух республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантне, кодификаторне, спецификацине, тĕрĕслевпе хаклав материалĕсене кашни çул валли хатĕрлесе, республикăн пĕрлехи экзаменне ирттерсе пухнă опытпа усă курнă.

Хатĕрлекенĕ – филологи наукисен кандидачĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн этнокультура вĕренĕвĕ кафедрин доценчĕ А.С. Егорова.

## Содержани

Ум сăмах………………………………………………………………….. 4

1. Изложени çырма хатĕрлесси……………………………………… 5

2. Тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси…………………………… 8

3. Сочинени çырма хатĕрлесси………………………………………. 14

Усă курма сĕннĕ литература……………………………………….. 18

Интернет ресурссем…………………………………………………. 19

Хушса панисем………………………………………………………. 20

1-мĕш хушса пани. Изложение хакламалли критерисем……………. 20

2-мĕш хушса пани. 2-мĕш пай хуравĕсем……………………………. 20

3-мĕш хушса пани. 9.1-мĕш ĕçе хакламалли критерисем…………… 21

4-мĕш хушса пани. 9.2-мĕш ĕçе хакламалли критерисем…………… 22

5-мĕш хушса пани. 9.3-мĕш ĕçе хакламалли критерисем…………… 23

6-мĕш хушса пани. Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем... 24

## Ум сăмах

Республикăн пĕрлехи экзаменĕ тĕп шкул пĕтерекен ачан чăваш чĕлхипе илнĕ пĕлĕвне пĕтĕмĕшле аттестаци картинче хаклама май парать.

Методика кăтартăвĕсен тĕп тĕллевĕ – шкул ачисене чăваш чĕлхипе республикăн пĕрлехи экзаменне хатĕрлеме пулăшасси.

2021 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне 2020 çулхипе танлаштарсан экзамен тытăмĕ улшăнман. Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ, малтанхи пекех, 9 ĕçе пĕрлештерекен 3 пайран тăрать.

1-мĕш пайра итленĕ текста çывăх изложени  çырмалла (1-мĕш ĕç). Текста ачасем икĕ хут итлеççĕ. Изложени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.

2-мĕш пай кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2 – 8-мĕш ĕçсем) тăрать. Кĕскен хуравламалли çакăн йышши ĕçсене палăртмалла:

– сăмах (сăмахсем) çырса хуравламаллисем;

– цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем.

Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. 2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла.

Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче – сĕннĕ 3 темăран пĕрне суйласа илсе калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла. Сочинени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, 2021 çула Чăваш Енре Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккине тăвакансен ĕç паттăрлăхне халалланă. Çакăн çинчен калакан Указа Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев 2020 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кăларнă. Республика тата çĕршыв историйĕнчи пĕлтерĕшлĕ пулăм кăçал 80 çул тултарать, çавăнпа та экзаментa итлемелли тата вуламалли текстсен темисем çак пулăмпа çыхăннă.

## 1. Изложени çырма хатĕрлесси

Экзаменăн 1-мĕш пайĕ – итленĕ текста çывăх изложени çырасси. Изложени çыртарни ачасене тĕрĕс те логика тĕлĕшĕнчен çыхăнуллă шухăшлама, ачасен сăмах йышне ӳстерме, орфографи тата пунктуаци пĕлĕвĕсемпе хăнăхăвĕсене тарăнлатса çирĕплетме пулăшать. Изложени тĕсĕсем (тулли, текста çывах, суйлавлă, кĕске т.ыт.те.) нумай. Вĕсенчен чылайăшĕпе экзамена хатĕрленме усă курма пулать. Изложени çырма тĕрлĕрен хăнăхтару туса вĕрентме пулать. Хатĕрленӳ хăнăхтарăвĕсем шутне текстпа паллашасси, ăна микротемăсем çине пайласси, план тăвасси, сăмахсемпе ĕçлесси кĕрет.

Изложени çырма хатĕрленĕ чухне ачасене текстăн темипе тĕп шухăшне тĕрĕс тупма хăнăхтармалла. Каларăмăр ĕнтĕ, 2021 çула Чăваш Енре Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккине тăвакансен ĕç паттăрлăхне халалланă пирки экзамента итлемелли текст теми çак пулăмпа çыхăннă.

Текста пирвайхи хут вуланă хыççăн пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмахсене ăнлантармалла, доска çине датăсене, пайăр ятсене çырса памалла. Сăмахăн пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ контекстра кăна уçăмланнине асра тытмалла. Çавăнпа контекста тимлĕ тишкерме тивет. Уйрăмах сăнарлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене шута илмелле. Малтанхи хут вуланă чухне ачасен текстăн планĕпе çыхăннă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене çырса пыма ирĕк пур.

Иккĕмĕш хут итленĕ май ачасем текст тытăмне тĕплĕнрех тишкереççĕ, микротемăсен йĕркине сăнаççĕ. Час-час тĕл пулакан сăмахсене, синонимсемпе антонимсене асăрхамалла, вĕсемпе изложени çырнă чух усă курмалла. Вĕсем текстăн тĕп шухăшне уçса пама пулăшĕç.

Республикăн 2021 çулта тытмалли пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантĕнче Р. Петрова-Ахтимирова çырнă текст сыпăкне кĕртсе панă.

*1941 çулхи кĕр кунĕсем. Таçта аякра вăрçă пырать. Хăрушă вăрçă. Вăрçă шавне ăнланаймастпăр-ха эпир, вĕт-шакăрсем. Тупă сасси пирĕн яла çитмест. Çапах та хăрушлăх Кĕтне хĕрринче ларакан пĕчĕк ялта та аванах сисĕнет. Окоп, трасса чаваççĕ тĕрлĕ ялтан килнĕ вăрçă çулне çитмен*

*çамрăксем. Сталинградран Атăл тăрăх нимĕç танкĕсем хăпарас пулсан сыхланма кирлĕ ку окопсем. Кашни килтех пурăнаççĕ окоп чавакансем. Пирĕн патăмăрта – хамăр ялтан вун икĕ çухрăмри Пуянкасси çамрăкĕсем.*

*Окоп чавакансем таврăннă çĕре асанне вут хутса пӳрте ăшăтать, яшка пĕçерет. Шăнса хытнă çамрăксем ăшă пӳрте кĕрсе тăраççĕ, хывăнса сĕтел хушшине лараççĕ... Апат хыççăн асанне юмах каласа парать. „Ĕлĕк-авалах пулнă ку. Пĕр чăваш ялне инкек çитет. Хĕвел тĕксĕмленет, уйăх çутатмасть. Йĕри-тавра çил-тăвăл алхасать. Ялта сывлама май çук. Тӳссе тăраймасть çакна Уçиме ятлă хĕр. Çил-тăвăл алхаснине пăхмасăрах таса уя тухать, ял халăхне çăмăллăх кӳме пулăшу ыйтать. Çӳлти Турă Уçиме ыйтнине илтет. Çак самантрах Уçиме аякка-аякка тăсăлакан вăрман пулса тăрать. Вăрман хĕрĕн тăван ялне çил-тăвăлтан хӳтĕлесе хăварать“.*

*Асанне каласа панине окоп чавакансем тимлĕ итлеççĕ, ăна ăша хывса ассăн сывлаççĕ. Тахçан авал пулнă ĕç çинчен калакан халап кунĕпе шартлама сивĕре окоп чавнă çамрăксене вăй парать, вĕсен ывăнни те иртсе каять. Çапла вара, паттăр хĕр Уçиме халăха çĕнтерĕве çывхартма пулăшать.*

Ку текст тăрăх çакăн пек микротемăсем палăртма пулать.

| **Абзац номерĕ** | **Микротема** |
|---|---|
| **1** | 1941 çулхи кĕркунне Кĕтне хĕрринчи пĕр ялта вăрçă çулне çитмен çамрăксем Сталинградран Атăл тăрăх нимĕç танкĕсем хăпарас пулсан сыхланма кирлĕ окопсем чаваççĕ. |
| **2** | Окоп чавакансем таврăннă çĕре асанне вут хутса пӳрте ăшăтать, яшка пĕçерет, апат çитернĕ хыççăн Уçиме çинчен юмах каласа парать. |
| **3** | Асанне Уçиме хĕр паттăрлăхĕ çинчен каласа панă халап кунĕпе шартлама сивĕре окоп чавнă çамрăксене вăй парать, çĕнтерĕве çывхартма пулăшать. |

Çырса пынă тĕрев сăмахĕсем тăрăх тулли план хатĕрлеме юрать, мĕншĕн тесен лайăх йĕркеленĕ тулли план изложени ĕçне çăмăллатать, микротемăсене тĕрĕс уйăрма пулăшать. Планра ытлашши ним те пулмалла мар. Абзацран абзаца куçнă чухне çĕнĕ микротемăна пуçлакан сăмахсене,

сăмах майлашăвĕсемпе предложенисене шута хумалла. Тулли план тума 5 минут уйăрма пулать. Ун хыççăн изложени çырма пуçламалла.

План вырăнне тĕрев конспекчĕ çырма юрать. Ку ĕçе çакăн пек йĕркелесен аван: хута вертикаль йĕрпе çурмалла уйăрмалла. Хут листин пĕр енне текста пĕрремĕш хут вуланă вăхăтра тĕрев сăмахĕсем çырса пыраççĕ, тепĕр енне – иккĕмĕш хут вуланă вăхăтра, сиктернĕ сăмахсемпе предложенисене хушаççĕ, текст авторĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене çырса хураççĕ. Йăнăшсем пулсан – тӳрлетеççĕ.

Изложени оригиналпа туллин тӳр килмелле, оригиналта çуккине хушса çырма юрамасть. Асра тытмалла: экзаменра сочинени евĕр изложени мар, текста çывăх изложени çырас пулать. Изложени çырнă чух çуралнă шухăшсемпе шкул ачи сочинени (9.1-мĕш ĕç) хайланă чух усă курма пултарать.

Изложени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Экзамента изложени çырас йĕрке çапла пулмалла:

1) пĕрремĕш хут итленĕ чухне текстăн тĕп шухăшне ăнланма тăрăшмалла, тĕп сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене çырса пымалла;

2) иккĕмĕш хут итленĕ чух сиктернĕ сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене тата предложенисене хушса çырмалла;

3) изложение хуравăша (черновика) çырмалла;

4) çырнă текста абзацсем çине пайламалла, абзацсенчи сăмах шутне шутламалла;

5) текстра пĕтĕм сăмах шучĕ 70 сăмахран кая пулсан текста паллă ячĕсем, деепрчастисемпе причастисем хушса пуянлатмалла;

6) текстра йăнăш пуррипе çуккине тĕрĕслемелле те таса бланк çине куçарса çырмалла.

## 2. Тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси

Экзаменăн 2-мĕш пайĕнче тест ыйтăвĕсене хуравламалла. Ку ĕçĕн тĕллевĕ – вĕренекен вуланă текста ăнланма тата текстран кирлĕ информаци илме пултарнине, чĕлхе пулăмĕсене тишкерсе классификацилеме пĕлнине тĕрĕслесси.

2-мĕш пай кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2–8-мĕш ĕçсем) тăрать. Кĕскен хуравламалли ĕçсем шутне сăмах (сăмахсем) тата цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем кĕреççĕ. Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. 2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла.

Малалла республикăн 2021 çулта тытмалли пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантĕнче панă кашни ыйтăва уйрăммăн пăхса тухăпăр.

**Тестăн пĕрремĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 2-мĕш ĕç)** предложенисен тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) тупассипе çыхăннă.

Экзамен тытаканăн 5 предложенирен тăракан текста вуласа тухмалла та хуравра предложенисен тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартмалла. Предложенисене тишкернĕ чухне çаксене асра тытмалла:

1) предложенин тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) палăртма сказуемăйран пуçламалла;

2) сказуемăй чăваш чĕлхинче ытларах чухне предложени вĕçĕнче тăрать;

3) сказуемăй ытларах чухне глаголтан, япала ятĕнчен, паллă ятĕнчен пулать;

4) глаголăн сăпатлă формисем предложенире яланах сказуемăй пулаççĕ;

5) подлежащи хăй пĕлтерĕшлĕ пур пуплев пайĕнчен те пулма пултарать;

6) тĕп падежри 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат местоименийĕсем предложенире яланах подлежащи е сказуемăй пулаççĕ.

**Тĕслĕх**. Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Пирĕн ял ытла пысăках мар. (2)Аякран вăл вăрман пекех курăнать. (3)Манăн хулара пурăнакан пичче кашни уйăхрах яла килсе çÿрет. (4)Ялăн тĕлĕнтермĕшĕ – пĕвесем. (5)Вĕсене пăхсах тăраççĕ, вăхăтра тасатаççĕ.*

*Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.*

*1) ял пысăках мар (1-мĕш предложени);*

*2) вăрман курăнать (2-мĕш предложени);*

*3) пурăнакан пичче (3-мĕш предложени);*

*4) тĕлĕнтермĕшĕ пĕвесем (4-мĕш предложени);*

*5) вĕсене тăраççĕ, тасатаççĕ (5-мĕш предложени).*

Чи малтанах текстпа паллашатпăр, кашни предложенин тĕп членĕсене тупатпăр: *ял пысăках мар* (1-мĕш предложени); *вăл курăнать* (2-мĕш предложени); *пичче килсе çÿрет* (3-мĕш предложени); *тĕлĕнтермĕшĕ пĕвесем* (4-мĕш предложени); *пăхсах тăраççĕ, тасатаççĕ* (5-мĕш предложени).

Предложенисен хамăр палăртнă тĕп членĕсене хураврисемпе танлаштарса тухатпăр та 1-мĕшпе 4-мĕш хуравсем тĕрĕссине ăнланатпăр, 1, 4 цифрăсене хуравра çыратпăр. 5-мĕш хурав тĕрĕс пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен подлежащи тĕп падежри сăмахран кăна пулма пултарать (*вĕсене* – пару падежĕнче). Тĕп падежра тăрать пулин те 2-мĕш вариантри *вăрман* сăмах та подлежащи пулаймасть, мĕншĕн тесен ку предложенире ял курăнни çинчен сăмах пырать. 3-мĕш вариантри *пурăнакан* сăмах ĕçе пĕлтермест, япала паллине пĕлтерет, предложенире определени пулать.

**Тестăн иккĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 3-мĕш ĕç)** пунктуаци тишкерĕвĕпе çыхăннă. Ку ĕçре предложенири хăш-пĕр сăмахсем хыççăн цифрăсем лартса тухнă. Ачасен чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене суйласа илсе хуравра çырмалла.

**Тĕслĕх**. Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Çулçăллă вăрманта пурăнакан (1) шурă мулкачсем (2) кĕркунне çитеспе (3) вăрмантан тухса тараççĕ (4) мĕншĕн тесен вĕсем çулçă пат! татăлса ўкнинчен (5) кайăксем çĕрте апат шыраса (6) сасă кăларнинчен (7)ытти шăв-шавран (8) шутсăр хăраççĕ.*

Предложение тишкеретпĕр те ку пăхăнуллă хутлă предложени пулнине, унăн пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе *мĕншĕн тесен* союзпа çыхăннине асăрхатпăр. *Мĕншĕн тесен* союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложение тĕп предложенирен яланах запятойпа уйăрмаллине аса илетпĕр те хуравра *4* цифра çыратпăр. Çавăн пекех предложенире пĕр йышши дополненисем (*ўкнинчен, кăларнинчен, шăв-шавран*) пуррине, вĕсем пĕр-пĕринпе союзсăр çыхăннине асăрхатпăр. Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăнсан вĕсене запятойпа уйăрмаллине аса илетпĕр те хуравра *5, 7* цифрăсем çыратпăр. Хуравра *1, 2, 3, 6, 8* цифрăсене çырмастпăр, мĕншĕн тесен вĕсем тăракан вырăнсене чарăну палли лартма сăлтав çук.

**Тестăн виççĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 4-мĕш ĕç)** синтаксис тишкерĕвĕпе çыхăннă: сăмах майлашăвĕн тĕп пайне (компонентне) çырмалла. Чăваш чĕлхинче сăмах майлашăвĕн тĕп компоненчĕ яланах пăхăнаканни хыççăн тăрать. Вăл пĕр сăмахлă та, темиçе сăмахлă та пулма пултарать. Икĕ пай хушшинчи пулăшу сăмахĕсем пăхăнакан пай тытăмне кĕреççĕ.

**Тĕслĕх**. *Уй варринчи пĕччен йăмран усăнса аннă турачĕсем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

*Уй варринчи пĕччен йăмран усăнса аннă турачĕсем* сăмах майлашăвĕн тĕп компоненчĕ – *усăнса аннă турачĕсем* .

**Тестăн тăваттăмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 5-мĕш ĕç)** орфографи тишкерĕвĕпе çыхăннă. Экзамен тытакан тĕрĕс çырма пĕлни çителĕксĕр, унăн орфографи тĕлĕшĕнчен сăмаха мĕншĕн çапла çырнине те ăнлантарма пĕлмелле. 5-мĕш ĕçе тĕрĕс тăвас тесен шкул ачисен çак правилăсем çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла:

1) хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, вăрăмлăхĕпе кĕскелĕхне, янаравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура палăртасси;

2) пĕрле, дефиспа е уйрăм çырасси;

3) пайăр ятсене çырасси.

**Тĕслĕх**. Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.

*1) шукăльлен* – сăмах вĕçĕнчи çемçелĕх паллине хупă сасăпа пуçланакан пур аффикс умĕнче те çырмалла;

*2) хитре-хитре* – мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;

*3) Вăрманкас* – пайăр ятсен çыхăнăвĕнчен пулнă ял ячĕсене пĕрле çырмалла;

*4) пултарулăх* – -лăх/-лĕх аффикссенче яланах пĕр л çырмалла;

*5) çап-çамрăк* – пĕр тан ăнлава палăртакан сăмахсен пĕрлешĕвне дефиспа çырмалла.

Хуравăн 1-мĕш вариантне тĕрĕс ăнлантарнă: сăмах вĕçĕнчи çемçелĕх паллине хупă сасăпа пуçланакан пур аффикс умĕнче те çырмалла. Хуравăн 2-мĕш вариантне тĕрĕс ăнлантарман: *хитре-хитре* сăмах мăшăр сăмах мар, икĕ хут калакан сăмах пулать. 3-мĕш вариантра ял ятне мĕнле çырмаллине тĕрĕс ăнлантарман: *Вăрманкас* ял ячĕ пайăр мар ятсен çыхăнăвĕнчен пулнă. 4-мĕш варианта тĕрĕс ăнлантарнă. 5-мĕш вариантра ăнлантарни тĕрĕс мар: дефиса сăмахăн пĕр пайне икĕ хут каланăшăн лартнă.

**6–8-мĕш ĕçсем** пурте пĕр текстпа çыхăннă. 3-мĕш пайри сочиненисенче те çак текстран илнĕ аргументсемпе усă курмалла. Çавăнпа текста уйрăмах тимлĕ вуламалла.

**Текст тĕслĕхĕ.** *(1)Шартлама сивĕ çанталăк тăрать. (2)Сăр хĕррине илсе кайрĕç. (3)Юхан шыв ку енче, чăнкă çыр хĕррипе, тарăн канавсем чаватпăр. (4)Тăшман пирĕн еннелле çитме пултарать, танксем ан каçайччăр тесе ăнлантараççĕ пире.*

*(5)Çĕр питĕ тарăн шăннă, чул пек хытса ларнă çĕре аран-аран алтатпăр. (6)Хăшĕсем пешнесемпе ĕçлеççĕ, хăшĕсем шăннă тăпрана кĕреçесемпе çӳлелле ывăтса тăраççĕ. (7)Юхан шыв енчен пĕр чарăнми çил кастарать. (8)Кăвайт чĕртес – вутти çук. (10)Унта-кунта çеç хăва*

*тĕмĕсем лараççĕ. (11)Çи-пуç япăх. (12)Çилĕ вара тарланă шăм-шака витĕр тухасла вĕрет.*

*(13)Хваттерте Мишеркассинче пурăнатпăр. (14)Кашни килте – çирĕм-вăтăр çын. (16)Ларма-тăма та вырăн çук. (17)Тăла-çăпатана типĕтме те çук. (18)Ирпе çаплипех тумланкалатпăр та Сăр хĕррине утатпăр. (19)Ирхине – вунă çухрăм, каçхине – каялла вунă çухрăм…*

*(20)Çапла, аса илӳ хыççăн аса илӳ... (21) Окоп чавакансен те хăйсен вăрçи пулнă, вĕсем те паттăрлăх кăтартнă...* (А. Угольников*.)

**Тестăн пиллĕкмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 6-мĕш ĕç)** текстăн содержанине тишкерессипе çыхăннă. Ачасен текста тимлĕ вуламалла та хурав варианчĕсенчен текст содержанине хирĕçлеменнисене суйласа илмелле. Йăнăшсем ытларах факт тĕлĕшĕнчен (пайăр ятсене, ĕç вăхăчĕпе вырăнне, япала е ĕç шутне т.ыт.те йăнăш палăртни) тӳр килменнипе пулма пултараççĕ.

**Тĕслĕх**. Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?

*1) Кĕтне хĕррине илсе кайрĕç.*

*2) Юхан шыв ку енче, чăнкă çыр хĕррипе, тарăн канавсем чаватпăр.*

*3) Хăшĕсем пешнесемпе ĕçлеççĕ, хăшĕсем шăннă тăпрана кĕреçесемпе çӳлелле ывăтса тăраççĕ.*

*4) Хваттерте Тутаркассинче пурăнатпăр.*

*5) Ирхине – çичĕ çухрăм, каçхине – каялла çичĕ çухрăм…*

Ĕçлекенсене Кĕтне хĕррине мар, Сăр хĕррине илсе кайнине 2-мĕш предложенирен пĕлетпĕр, çавăнпа 1-мĕш вариант хуравĕ тĕрĕс мар. 3-мĕш тата 6-мĕш предложенисене вуласа 2-мĕшпе 3-мĕш вариантсем тĕрĕссине куратпăр. 13-мĕшпе 19-мĕш предложенисем 4-мĕшпе 5-мĕш хуравсем тĕрĕс маррине ĕнентереççĕ.

**Тестăн улттăмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 7-мĕш ĕç)** текстра илемлĕх мелĕсене тупассипе çыхăннă. Экзамен ĕçĕнче чĕлхене илемлетекен мелсенчен эпитет, танлаштару, метафора, метоними, сăпатлантару пулма пултарать.

**Тĕслĕх.** Танлаштарullă предложени(сен) номерне кăтартăр.

*(1) Шартлама сивĕ çанталăк тăрать.*

*(2) Çĕр питĕ тарăн шăннă, чул пек хытса ларнă çĕре аран-аран алтатпăр.*

*(3) Юхан шыв енчен пĕр чарăнми çил кастарать.*

*(4) Ирпе çаплипех тумланкалатпăр та Сăр хĕррине утатпăр.*

*(5) Окоп чавакансен те хăйсен вăрçи пулнă, вĕсем те паттăрлăх кăтартнă.*

Танлаштару тесе лайăхах пĕлмен япалана е унăн пĕр-пĕр паллине лайăхрах пĕлекен тепĕр япалапа е унăн паллипе танлаштарса кăтартнине калаççĕ. Танлаштарăвăн грамматика мелĕсем:

1) *пек, евĕр, евĕрлĕ, майлă, йышши, манерлă* т.ыт. сăмахсем (*хурăн пек яштака, хуçа евĕр тыткала* т.ыт.те);

2) ят сăмахсен туху падежĕнчи формипе танлаштару форминчи паллă ячĕн пĕрлешĕвĕ (*Канашран пысăкрах хула, тилĕрен чеерех çын* т. ыт.те).

*Çĕр питĕ тарăн шăннă, чул пек хытса ларнă çĕре аран-аран алтатпăр* предложенире *чул пек* сăмахсем танлаштару пулаççĕ. Ытти предложенисенче танлаштару çук.

**Тестăн çиччĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 8-мĕш ĕç)** лексикăпа (антоним е синоним тупассипе) çыхăннă.

***Тĕслĕх.*** *Алтатпăр* сăмахăн (5-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

Синонимсем тесе пĕр ăнлавах пĕлтерекен, анчах тĕрлĕрен илтĕнекен сăмахсене калаççĕ. *Алтатпăр* сăмахăн синонимĕ – *чаватпăр,* вăл 2-мĕш предложенире тĕл пулать.

Ачасене тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентме 8, 9-мĕш классем валли хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнекисенчи текстсемпе те усă курма пулать. Вăл е ку текста вуланă хыççăн ыйтусемпе ĕçлеттермелле, ыйтăвĕсене вара маларах кăтартнă пек йĕркелемелле.

## 3. Ăслав сочиненийĕ çырма хатĕрлесси

Экзаменăн 3-мĕш пайĕ вăл – калăпăшĕпе пысăк мар ăслав сочиненийĕ çырасси. Хаклав виçи тăрăх, ачасен сочиненийĕсенче сахалтан та 70 сăмах пулмалла.

Хакланă чухне сочинение нумай енчен пăхаççĕ: ача итленĕ тата вуланă текстсенчен аргумент илме пултарни; автор шухăшне е хăй шухăшне логика енчен çыхăнуллă çырса ĕнентерме пултарни. Ку рете сочинение орфографи, пунктуаци, пуплев, грамматика тата факт енчен мĕнле çырни те кĕрет.

Сочинени шухăш пĕрлĕхĕ пуррипе, пайсен çыхăнулăхĕпе тата уçăмлăхĕпе палăрса тăмалла. Шухăш пĕрлĕхĕ шухăша çыхăнуллă аталантарса ĕнентерме, пĕтĕмлетӳ тума пĕлнинче те сисĕнет. Сочинени авторĕ тема пирки хăй мĕн шухăшлани яр уççăн курăнмалла.

2021 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх вариантĕнче А. Угольников çырнă текст сыпăкне кĕртсе панă.

*(1)Шартлама сивĕ çанталăк тăрать. (2)Сăр хĕррине илсе кайрĕç. (3)Юхан шыв ку енче, чăнкă çыр хĕррипе, тарăн канавсем чаватпăр. (4)Тăшман пирĕн еннелле çитме пултарать, танксем ан каçайччăр тесе ăнлантараççĕ пире.*

*(5)Çĕр питĕ тарăн шăннă, чул пек хытса ларнă çĕре аран-аран алтатпăр. (6)Хăшĕсем пешнесемпе ĕçлеççĕ, хăшĕсем шăннă тăпрана кĕреçесемпе çӳлелле ывăтса тăраççĕ. (7)Юхан шыв енчен пĕр чарăнми çил кастарать. (8)Кăвайт чĕртес – вутти çук. (10)Унта-кунта çеç хăва тĕмĕсем лараççĕ. (11)Çи-пуç япăх. (12)Çилĕ вара тарланă шăм-шака витĕр тухасла вĕрет.*

*(13)Хваттерте Мишеркассинче пурăнатпăр. (14)Кашни килте – çирĕм-вăтăр çын. (16)Ларма-тăма та вырăн çук. (17)Тăла-çăпатана типĕтме те çук. (18)Ирпе çаплипех тумланкалатпăр та Сăр хĕррине утатпăр. (19)Ирхине – вунă çухрăм, каçхине – каялла вунă çухрăм…*

*(20)Çапла, аса илӳ хыççăн аса илӳ... (21) Окоп чавакансен те хăйсен вăрçи пулнă, вĕсем те паттăрлăх кăтартнă...* (А. Угольников*.)

***Александр Угольников** (1941 – 1998)* – чăвашсен паллă çыравçи, журналисчĕ.

Сочинени пуçламăшĕнче тезис пулмалла. Тезис – хускатнă ыйту çине хурав калăплани; хушнă ĕçре панă сăмаха ăнлантарни, уçса пани; ăславра ĕнентермелли шухăш.

Тезиса çырас умĕн ĕçе (задание) тепĕр хут вуласа тухмалла. Ăнланас пулать: вуланă текстра палăртнă мĕнле шухăша уçса памалла е мĕнле сăмах пирки ăслав çырмалла? Çав сăмаха текстра тупмалла. Контекст мĕнлереххине сăнамалла, çав сăмах текстра мĕнле пĕлтерĕшлине ăнланмалла.

Тезис çырма кластерсемпе ĕçлени пулăшать, сăмахран, паттăрлăх темăпа кластерсем тутарма пулать.

Тĕп пайĕнче сочинени пуçламăшĕнче хускатнă шухăша малалла аталантарса пымалла. Сочиненин тĕп пайĕнче акă мĕн-мĕн пулмалла:

1) хускатнă ыйту çинчен текст авторĕ мĕн шухăшланине (позицине) палăртни;

2) каланă шухăшсене ăнлантарни (комментари пани);

3) харпăр хăй шухăшне вуланă тата итленĕ текстсенчи, пурнăçри, обществăри тата илемлĕ литературăри (сочинени темине кура) тĕслĕхсем çине таянса палăртни, тепĕр майлă каласан, аргументсемпе ĕнентерни.

Сочиненин тĕп пайĕнче шухăша аргументсемпе ĕнентермелле. Аргумент – тезиса ĕнентерме пулăшакан ĕçсемпе пулăмсем, фактсем, тĕслĕхсем, ăнлантарнисем т. ыт. те. Аргументсене экзаменра итленĕ тата вуланă текстсенчен илме юрать. Хăвăр курни-илтни, унччен вулани çине таянма та май пур.

Аргументсене ăçтан илесси 9.1–9.3 темăсенчен хăшне суйласа илнинчен килет. Малалла тĕслĕх вариантра панă темăсене пăхса тухăпăр.

**«Вĕсем Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ»** темăпа (9.1-мĕш тема) шухăша икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентермелле: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илмелле.

**«Окоп чавакансен те хăйсен вăрçи пулнă, вĕсем те паттăрлăх кăтартнă»** темăпа (9.2-мĕш тема) шухăша вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентермелле.

**«Мĕн вăл паттăрлăх?»** темăпа (9.3-мĕш тема) шухăша икĕ тĕслĕхпе ĕнентермелле: пĕр тĕслехне вуланă текстран, теприне пурнăçăр опытĕнчен илмелле.

Аргументсене сочиненире кăтартма çакăн пек предложенисемпе усă курма пулать:

*А. Угольников çырнă текстра …*

*Каланине ĕнентерме …-мĕш предложение илсе пăхатпăр.*

*…-мĕш предложени …. шухăша çирĕплетет.*

*Ку шухăша …А. Угольников текстĕнчи ..-мĕш предложенипе çăмăллăнах ĕнетерме пулать.*

*Сăмахран, окоп чавакансем те паттăрлăх кăтартнине текстри çак предложенисемпе ĕнетерме пулать.*

**Аргументсене сочиненире кăтартмалли ĕлкесем**

| | |
|---|---|
| Предложени номерне скобкăсăр кăтартни | *..-мĕш предложенире шăпах çак шухăша уçса панă.* |
| Предложени номерне скобкăра кăтартни | *Тăла-çăпатана типĕтме те çук. (17-мĕш предложени).* |
| Предлжение номерне палăртмасăрах цитатăлани (чарăну паллисем çинчен манса каймалла мар) | *Хваттерсенче çирĕмшер-вăтăршар çын пурăнни çинчен çырать А. Угольников.* |
| Чĕлхе пулăмĕсене палăртса цитатăлани | *Çĕр мĕнле шăнса хытнине палăртма автор «чул пек» (5-мĕш предложени) танлаштарупа усă курать.* |
| Предложени номерне скобкăсăр кăтартни, цитатăн уйрăм сăмахĕсене кавычкăна илни | *Окоп чавакансене çав тери сивĕ пулнине 7-12-мĕш предложенисем тăрăх пĕлетпĕр: «пĕр чарăнми çил кастарать», ăшăнма «вутти çук», «çи-пуç япăх».* |

Сочинени пĕтмĕшĕ ăслава вĕçленнĕ сĕм парать, пĕтĕмлетӳсем патне илсе çитерет. Пĕтĕмлетӳ – аргументсем çине таянса тата тезиспа çыхăнтарса пĕтĕмлетни. Ăна çакăн пек ĕлкесемпе çырма пулать:

*Çапла вара, … .Апла пулсан, … Каланине пĕтĕмлетсе, … палăртмалла (палăртас килет). … тесе шухăшлатăп. …. шанас килет. …. çакăн пек шухăшсем çуралчĕç.*

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Аса илтеретпĕр, ăслав сочиненийĕ çырнă чух шкул ачин текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе уçăмлăн кăтартмалла (автор позицийĕпе тӳр килмест пулсан та). Сирĕн сочинени темипе тĕп шухăшĕ, композици çыхăнулăхĕпе тĕрĕслĕхĕ, сăмах пуянлăхĕпе палăртулăхĕ пуррипе палăрса тăмалла. Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курма манмалла мар.

Çапла вара, ăслав сочиненийĕ çырнă чухне чи кирли сочинени темине тĕрĕс ăнланни, ăна уçса памалли мелсене суйласа илме пĕлни. Çакна тума вара ăслав сочиненийĕн тытăмне çирĕп пĕлни, тезис калăпламалли, аргументсем илсе памалли ăслайсемпе усă курма пĕлни кирлĕ. Сочинени ĕçĕ виçĕ пайран тăнине асра тытса яланах шухăша пĕтĕмлетсе хăвармалла. Пĕтĕм ĕç сĕннĕ темăпа çине-çине çыхăнса пымалла.

Экзамена хатĕрленме «Чăваш чĕлхи. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ» вĕренӳпе меслетлĕх кĕнеки пысăк пулăшу пама пултарать. Кĕнекере 9-мĕш класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе республикăн пĕрлехи экзаменне хатĕрлеме тĕрлĕ материал пур: изложенипе сочинени çырма, тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентмелли кăтартусем, малтан пулнă экзаменсен тĕрĕслев ĕçĕсем, экзамена хатĕрленмелли материал, сочинени тĕслĕхĕсем, хаклав критерийĕсем. Таблица формипе хуравсем кĕртнĕ, хатĕрленмелли литература сĕннĕ. Кĕнекепе ачасем экзамена хăйсем тĕллĕн те хатĕрленме пултараççĕ.

# УСĂ КУРМА СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА


1. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: Чăваш шкулĕн 10–11-мĕш классĕсем валли / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. – 175 с.
2. Виноградов Ю.М. Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси: Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2007. – С. 83–106.
3. Виноградов Ю.М. Хăнăхтару пуххи: 8 – 9 классем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2008. – 163 с.
4. Горшков А.Е. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ / А.Е. Горшков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1981. – 127 с.
5. Егорова А.С. Единый республиканский экзамен по чувашскому языку: опыт, проблемы, перспективы / А.С. Егорова // Актуальные вопросы исследования и преподавания родных языков и литератур: материалы Междунар. Науч.-практ.конф. (Чебоксары, 16 нояб. 2019 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина и др. – Чебоксары: ИД «Среда», 2019. – С. 204-206.
6. Егорова А.С. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ – вĕрентекенсен професси ăсталăхне тата вĕренекенсен мотивацине ӳстермелли мелсенчен пĕри. / Халăх шкулĕ . – 2020. – № 6. – С. 7-8.
7. Егорова А.С. Чăваш чĕлхи. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ / А.С. Егорова. – Шупашкар, 2020. – 138 с.
8. Орфографипе пунктуаци: тĕрĕс çырмалли правилăсем // Ю.М. Виноградов, Г.М. Виноградова Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн редакципе изд-во пайĕ, 2002. – С. 256–289.
9. Чăваш чĕлхипе экзамена хатĕрленесси: 9-мĕш класс / Ю.М. Виноградов пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2010. – 111 с.
10. Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. – 223 с.
11. Шкул ачисен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене хакласси: Чăваш шкулĕн 5–11 класĕсенче чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем валли / Чăваш Республикин Вĕренӳ министерстви; Ю.М. Виноградов, Л.Г. Петрова, Е.А. Майков хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин Вĕренӳ институчĕн редакципе издательство пайĕ, 2004. – 30 с.

## ИНТЕРНЕТ РЕСУРСЕМ


1. Демонстрационный вариант контрольных измерительных материалов для проведения в 2021 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА – 9)// [Электронный ресурс] / Режим доступа: gia_-9_2021_chyail_demo_rotated.pdf (cap.ru)

2. Кодификатор элементов содержания и требований к уровню подготовки обучающихся для проведения в 2019 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА –9) // [Электронный ресурс] / Режим доступа: gov.cap.ru/Content2020/orgs/GovId_897/gia_-_9_2021_chyail_kodifikator_rotated.pdf

3. Республикӑн пӗрлӗхлӗ экзаменне хатӗрленесси (тӗрӗс ҫырӑва, пуплеве хӑнӑхасси) / [Электронный ресурс] / Режим доступа: https://portal.shkul.su/a/theme/259.html

4. Спецификация контрольных измерительных материалов для проведения в 2021 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку (ГИА – 9) // [Электронный ресурс] / Режим доступа: gia_-9_2020_chyail_specifikaciya_rotated_removed.pdf (cap.ru)

5. 2021 ҫулта 9 класс пӗтерекенсене чӑваш чӗлхипе патшалӑх шайӗнче тытмалли тӗп экзамента изложени ҫырма хатӗрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

6. 2021 ҫулта 9 класс пӗтерекенсене чӑваш чӗлхипе патшалӑх шайӗнче тытмалли тӗп экзамента сочинени ҫырма хатӗрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

7. 2021 ҫулта 9 класс пӗтерекенсене чӑваш чӗлхипе патшалӑх шайӗнче тытмалли тӗп экзамента тест ыйтӑвӗсене хуравлама хатӗрлесси // [Электронный ресурс] / Режим доступа: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

**Хушса панисем**

*1-мӗш хушса пани*

**Изложение хакламалли критерисем**

| | | |
|---|---|---|
| **И1** | **Изложенире оригинал текстӑн содержанийӗ палӑрни** | |
| | **Текст содержанийӗ пӗртте пӑсӑлман, 1-мӗш таблицӑра палӑртнӑ пур микротемӑна та уҫса панӑ** | 2 |
| | Текстӑн тӗп содержанине уҫса панӑ, анчах пӗр микротемӑна сиктерсе хӑварнӑ е хушса панӑ. | 1 |
| | Текстӑн тӗп содержанине уҫса панӑ, анчах пӗр микротемӑран ытларах сиктерсе хӑварнӑ е хушса панӑ. | 0 |
| **И2** | **Оригинал текстӑн содержанине уҫса панӑ чухнехи шухӑш туллилӗхӗ, пуплев ҫыхӑнулӑхӗ** | |
| | Ӗҫре шухӑш туллилӗхӗ, пуплев ҫыхӑнулӑхӗ палӑрать, логика йӑнӑшӗсем ҫук; текста абзацсене пайланӑ чухне йӑнӑшсем ҫук. | 2 |
| | Ӗҫре шухӑш туллилӗхӗ, пуплев ҫыхӑнулӑхӗ палӑрать, анчах логика йӑнӑшӗ 1 пур, тата/е абзацсем тунӑ чух 1 йӑнӑш кайнӑ. | 1 |
| | Ӗҫре шухӑш ҫыхӑнулӑхӗ палӑрать, анчах логика йӑнӑшӗ 1-рен ытла тунӑ, тата/е абзацсем тунӑ чух 2 йӑнӑш кайнӑ. | 0 |
| **И3** | **Пуплев тӗрӗслӗхӗ, уҫӑмлӑхӗ** | |
| | Шухӑша тӗрӗс те ӑнланмалла уҫса пама шкул ачи йышлӑ лексикӑпа, тӗрлӗ грамматика хатӗрӗсемпе усӑ курнӑ. | 2 |
| | Ачан сӑмах пуянлӑхӗ пур, анчах пӗрешкел грамматика хатӗрӗсемпе вӗҫӗмсӗр усӑ курни сисӗнет. | 1 |
| | Сӑмах ҫӳпҫи чухӑн, пӗрешкел грамматика хатӗрӗсемпе вӗҫӗмсӗр усӑ курнӑ. | 0 |
| | **Пур критерие те (И1–И3) тулли тивӗҫтерсе ҫырнӑшӑн пухнӑ пӗтӗм балл сумми** | **6** |

Тӗрӗс ҫырма пӗлнине изложенипе сочинени тӑрӑх иккӗшне те пӑхса уйрӑммӑн хаклаҫҫӗ (4-мӗш хушса пани).

*2-мӗш хушса пани*

**2-мӗш пай хуравӗсем**

**2-мӗш пайӑн** ӗҫӗсене **тӗрӗс** тусан шкул ачи кашни ӗҫшӗн 1-ер балл илет. Хурав **тӗрӗс пулмасан** е **вӑл пачах пулмасан** – 0 балл лартаҫҫӗ.

| Ӗҫ номерӗ | Тӗрӗс хурав |
|---|---|
| 2 | 14<е>41 |
| 3 | 457<е>ҫак цифрӑсен кирек мӗнле йӗрки |
| 4 | усӑнса аннӑ турачӗсем |
| 5 | 14<е>41 |
| 6 | 23<е>32 |
| 7 | 2 |
| 8 | чаватпӑр |

## 9.1-мӗш ӗҫе хакламалли критерисем

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| **С1** | Ача ҫырнă ӗҫ сӗннӗ темăпа тӳр килни | |
| | Сочинени содержанийӗ сӗннӗ темăпа тӳр килет. | 2 |
| | Сочинени содержанийӗ сӗннӗ темăпа тӳр килет, анчах ҫырнă текстра темăран пăраннă 1 вырăн пур. | 1 |
| | Сочинени панă темăпа тӳр килмест, е ача ӗҫӗнче темăран пăраннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |
| **С2** | **Шкул ачин шухăшӗ палăрни** | |
| | Текст авторӗсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтӗлесе шкул ачи хăйӗн позицине уҫăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторӗсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтӗлесе шкул ачи хăйӗн позицине уҫăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленӗ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийӗ ҫинчен ячӗшӗн ҫеҫ *Эпӗ авторсемпе килӗшетӗп. Эпӗ авторсемпе килӗшместӗп* йышши предложенисем ҫырса ҫырлахать. | 0 |
| **С3** | **Сочинени пуплевӗн ăслав тӗсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевӗн ăслав тӗсӗпе тӳр килет, шухăша ҫирӗплетме 2 (пӗр тӗслӗхне итленӗ текстран, теприне вуланă текстран илнӗ) аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевӗн ăслав тӗсӗпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| **С4** | **Шухăш пӗр пӗтӗмлӗхӗ, пуплев ҫыхăнулăхӗ тата шухăшсене йӗркипе уҫса пыни** | |
| | Ӗҫре шухăш туллилӗхӗ, пуплев ҫыхăнулăхӗ палăрать, логика йăнăшӗсем ҫук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем ҫук. | 2 |
| | Ӗҫре шухăш туллилӗхӗ, пуплев ҫыхăнулăхӗ палăрать, анчах логика йăнăшӗ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ӗҫре шухăш ҫыхăнулăхӗ палăрать, анчах логика йăнăшӗ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| **С5** | **Пуплев тӗрӗслӗхӗ, уҫăмлăхӗ** | |
| | Шухăша тӗрӗс те ăнланмалла уҫса пама йышлă лексикăпа, тӗрлӗ грамматика хатӗрӗпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхӗ пур, анчах пӗрешкел грамматика хатӗрӗпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах ҫӳпҫи чухăн, пӗрешкел грамматика хатӗрӗпе вӗҫӗмсӗр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени ҫырса пухнă пӗтӗм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

**9.2-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

| № | **Ăслав сочинение хакламалли критерисем** | Балсем |
|---|---|---|
| **С1** | Вуланă текстра палăртнă шухăша уçса пани | |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса панă. | 2 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса панă, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур. | 1 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса паман, е çырнă текстра темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |
| **С2** | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| **С3** | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме вуланă текстран илнĕ 2 аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| **С4** | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| **С5** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

*5-мĕш хушса пани*

**9.3-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| **С1** | Сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарса пани | |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. | 2 |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, анчах пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 1 |
| | Ача сăмахăн определенине тĕрĕс çырман е пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 0 |
| **С2** | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| **С3** | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне вуланă текстран, теприне пурнăç опытĕнчен илнĕ) аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| **С4** | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| **С5** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

**Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем**

Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ. Паллах, пысăк, пĕчĕк тата пĕрешкел йăнăшсене (халь усă куракан хаклав виçисене тĕпе хурса) шута илмелле.

| № | Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| **Г1** | ***Орфографи нормисене пăхăнни*** | |
| | Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Г2** | ***Пунктуаци нормисене пăхăнни*** | |
| | Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Г3** | ***Грамматика нормисене пăхăнни*** | |
| | Грамматика йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Г4** | ***Пуплев нормисене тытса пыни*** | |
| | Пуплев йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Ф1** | ***Факт тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни*** | |
| | Факт йăнăшĕсем çук | 2 |
| | 1 йăнăш пур | 1 |
| | 2 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Изложенипе сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (Г1–Г4, Ф1 критерисемпе)** | | **10** |

Тĕрĕс çырма пĕлнине хакланă чухне (ГК1–ГК4) **изложенипе сочинени калăпăшне** шута илес пулать. 7-мĕш таблицăра кăтартнă нормăсемпе изложенипе сочиненире усă курнă сăмахсен пĕтĕм йышĕ сахалтан та 140 пулсан хакламалла. Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан – кашни критерипе 1-ер балран ытларах лартма юрамасть.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан **1 балл** лартма çак условисем кирлĕ:

Г1 – орфографи йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г2 – пунктуаци йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г3 – грамматика йăнăшĕсем çук;

Г4 – пуплев йăнăшĕсем çук.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе туман тесе йышăнаççĕ, 0 балл лартса хаклаççĕ.

Ача изложение е сочинение çырман пулсан çакăн пек хакламалла:

– изложенипе сочинемири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 140 сăмахран сахал пулмасан Г1–Г4 критерисем тăрăх 7-мĕш таблицăра кăтартнă нормăсемпе хакламалла;

– изложенипе сочинемири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан – Г1–Г4 критерисем тăрăх 1-ер балран ытларах лартма юрамасть;

– изложенипе сочинемири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе 0 балл лартса хаклаççĕ.

Кашни критерипе **чи пысăк балл** илсен – экзамен ĕçĕшĕн 9-мĕш класс ачи **пĕтĕмпе 33 балл** пухĕ.